Кириллова Эльвира Николаевна
вĕрентекен
МБОУ "Новобуяновская СОШ"
Çĕнĕ Пуянкасси, Чăваш Республики

АЧА ХĂЙ ТĔЛЛĔНЛĔХНЕ ВОСПИТАНИ ПАРАС ĔÇРЕ ÇЕМЬЕ ПĔЛТЕРĔШĔ: ЙĂЛА-ЙĔРКЕ ТАТА ХАЛЬХИ САМАНА

Аннотаци*:* статьяра ачана хăй тĕллĕн пурăнма воспитани парас тата хатĕрлес ĕçре кил-йыш мĕнле вырăн йышăннине уçса параççĕ. Автор вĕренĕве тата ачасемпе куллен çыхăнса ĕçлеме пултаруллă, çаврăнăçуллă пăхмаллине палăртать – пĕр евĕрлĕх воспитани вăйĕн тухăçлăхне чакарать. Çемьепе шкул пĕрлĕхĕн пĕлтерĕшне уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрнă: вĕрентекенĕн ача куçĕнчи авторитетне хавшатни унăн вĕренӳ мотивацийĕпе çитĕнĕвĕсене япăх витĕм кӳрет. Чăваш культуринче çичĕ пил ăнлав пур: ĕçе хăнăхтарса ӳстересси; ачасене йĕркеллĕ, кăмăл-туйăмлă пулма вĕрентесси; ачан ăс-тăнне аталантарасси; илемлĕхе ăнланма вĕрентесси; вăй-хала ӳстерме хăнăхтараса пырасси; ачасене перекетлĕ пулма хăнăхтарасси; харпăр хăйне тытма вĕрентесси. Çын çак çичĕ пилпе килĕшӳллĕ пурăнать пулсан ăна чăн-чăн çын тесе шутланă. Автор ытлашши опека ыйтăвне те хускатать: ашшĕ-амăшĕ ытлашши тĕрĕслесе тăни ачан пуçарăвне пусарать, ăна пурнăçри йывăрлăхсене хăнăхма чăрмантарать. Статья шайлашуллă мелпе усă курма чĕнет, ун чухне ашшĕ-амăшĕ ачан уйрăм уйрăмлăхĕсене шута илет, унта хăй тĕллĕнлĕхе аталантарать, тивĕçлĕ харпăр тĕслĕх кăтартать.

Тĕп сăмахсем: ачасене воспитани парасси; çемье воспитанийĕ; çемьепе шкул пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлени; йăлана кĕнĕ хаклăхсем; чăваш культури; ĕç воспитанийĕ; ача хăй тĕллĕнлĕхĕ; вĕрентекен авторитечĕ; кăмăл-сипет аталанăвĕ; ачана яланах тĕрĕслесе тăнипе ирĕклĕх шайлашăвĕ.

Кириллова Эльвира Николаевна
учитель
МБОУ «Новобуяновская СОШ»
д. Новое Буяново, Чувашская Республика

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

РОЛЬ СЕМЬИ В ВОСПИТАНИИ САМОСТОЯТЕЛЬНОСТИ РЕБЁНКА: ТРАДИЦИИ И СОВРЕМЕННОСТЬ

Аннотация: *в статье раскрывается роль семьи в воспитании и подготовке ребёнка к самостоятельной жизни. Автор подчёркивает необходимость творческого, гибкого подхода к обучению и ежедневному взаимодействию с детьми – однообразие снижает эффективность воспитательных усилий. Особое внимание уделено важности единства семьи и школы: подрывание авторитета учителя в глазах ребёнка негативно сказывается на его учебной мотивации и успеваемости. В работе осмысляются традиционные ценности чувашской культуры – семь понятий благословения, включающих трудовое воспитание, формирование нравственности, развитие умственных способностей и чувства собственного достоинства. Автор также затрагивает проблему чрезмерной опеки: избыточный контроль со стороны родителей подавляет инициативу ребёнка и мешает ему адаптироваться к жизненным трудностям. Статья призывает к сбалансированному подходу, при котором родители учитывают индивидуальные особенности ребёнка, развивают в нём самостоятельность и подают достойный личный пример.*

Ключевые слова: *воспитание детей, семейное воспитание, взаимодействие семьи и школы, традиционные ценности, чувашская культура, трудовое воспитание, самостоятельность ребёнка, авторитет учителя, нравственное развитие, баланс опеки и свободы.*

Ачасене вĕрентсе ӳстерессине ялан тĕплĕ шухăшласа, творчествăлла туса пымалла. Çак ĕçре паянхи кун -ĕнерхинчен, ыранхи паянхинчен урăхларах пулмалла. Куллен-кун пĕр пек ĕçлесе пыни ашшĕ-амăшне, унтан ытларах ачасене йăлăхтарса çитерет. Вара тăрăшнин ăнăçлăхĕ те, усси те пулмасть. Çавăнпа куллен мĕн те пулин çĕннине кĕртсе пымалла, çĕнĕрен-çĕнĕ майсемпе, меслетсемпе усă курмалла.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Эпир халĕ çĕнĕ технологи ĕмĕрĕнче пурăнатпăр. Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, шав малалла шăвать. Мĕнле кăна техника çук-тăр? Кĕскен каласан, унăн хăйĕн ачисене кирлĕ пек пăхса ӳстерме пур условисем те çителĕклĕ пек.

Ашшĕ-амăшĕн те, ачасен те пĕрле пулма, пĕрле ĕçлеме вăхăт çителĕклĕ пулмалла. Çав вăхăтпа пĕлсе усă курни кирлĕ. Кунта тата çакна та çирĕп асăрхаттарса каламалла: ачасене тĕрĕс пăхса ӳстерес тесен ашшĕпе амăшĕ пĕр шутлă пулни кăна мар, вĕсем шкулпа, учительсемпе пулмалла.

Ман шутпа, ачасене тĕрĕс воспитани парасси, пăхса çитĕнтересси чи малтан ашшĕпе амăшĕнчен нумай килет. Общество, тăван çĕр-шыв, халăх умĕнче ачасемшĕн ответлисем вĕсем. Чăн-чăн çын пуласси çемьерен пуçланать ĕнтĕ. Ачасене нихăçан та суйма юрамасть. Кăткăс ыйтусене пурнăçри тĕслĕхсемпе çирĕплетсе каласа памалла. Паллах, ачасене пăхса ӳстернĕ чухне темле çитменлĕхсем те пулма пултараççĕ. Вĕсенчен пăрăнса иртме пĕлмелле. Ваттисем калашле, сахал пупле, нумай итле, юлхав ан пул, çынран ан кул, шӳт сăмахне çĕкле, пуçна пит ан çĕкле. Çаксене манмалла мар.

Ача вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймасть. Уншăн ашшĕпе амăшĕ шкула тата учителе айăплаççĕ. Ачи умĕнчех учителе хурлаççĕ. Кĕскен каласан, çапла учитель авторитетне пĕтереççĕ. Учителе хурлакан çемьери ачан шкулта йĕркеллĕ вĕренес, ĕлкĕрсе пырас шанчăк çук теме те юрать. Врач-и, бухгалтер-и, летчик-и, строитель-и, менеджмент-и, программист-и… – пурте учитель вĕрентнипе сĕнӳ панипе юрăхлă професси çыннисем пулаççĕ. Нумай чухне ача-пăча яланах ашшĕ-амăшĕнчен тĕслĕх илет, вĕсем пек пулма тăрăшать. «Çакна пирĕн яланах асра тытмалла» – тенĕ пĕр статьяра.

Кашни кил-йышрах ачасен хăйсен ашшĕ-амăшне итлемелле, чунтан хисеплемелле. Çавăн пек ан пултăр тесен ашшĕн те, амăшĕн те хăйсене тивĕçлĕ тытма пĕлмелле. Вĕсен хăйсем хушшинчи çитменлĕхсене, пĕчĕк хирĕçӳсене те питĕ асăрханса, ачисене систермесĕр татса пама тăрăшмалла. Чăваш культуринче çичĕ пил ăнлав пур: ĕçе хăнăхтарса ӳстересси; ачасене йĕркеллĕ, кăмăл-туйăмлă пулма вĕрентесси; ачан ăс-тăнне аталантарасси; илемлĕхе ăнланма вĕрентесси; вăй-хала ӳстерме хăнăхтараса пырасси; ачасене перекетлĕ пулма хăнăхтарасси;

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

харпăр хăйне тытма вĕрентесси. Çын çак çичĕ пилпе килĕшӳллĕ пурăнать пулсан ăна чăн-чăн çын тесе шутланă. Ман тата çакна калас килет: ачасене ĕçе хăнăхтарса ӳстерес пулать. Ĕçе юратмалла çеç мар, унăн яланах ĕçлес туртăм, ĕçлес кăмăл пултăр, вăхăта уссăр ан ирттертĕр.

Ачана пăхса ӳстерес ĕçре чи кирли тата вăл – ăна пурнăçра хăй тĕллĕн пурăнма хатĕрлесси. Ашшĕпе амăшĕсем ку енĕпе хытă тăрăшнине пула ачан пултарулăхĕ çирĕпленеймест. Вăл пурнăçа та сăнаса пырса вĕренеймест, мĕншĕн тесен унпа ытлашши тимлĕ пулни ăна аталанма тата ӳссе çитме чăрмантарать. Ачине пурнăçри тĕрлĕ йывăрлăхсенчен хӳтĕлесе, хытă юратакан ашшĕ-амăшĕ ăна пуçаруллă пулма чăрмантараççĕ. Яланах ачана тĕрĕслесе тăни питĕ йăлăхтарать, ывăнтарать. Çавăн пирки вара çитĕннĕ çынсемпе ача хушшинче час-часх тавлашусем пулса иртеççĕ. Çапла вара, ашшĕ-амăшĕн хăйсен ачин ырă енĕсемпе пĕрле унăн çитменлĕхĕсене те шута илсе, ăна тĕрĕс хак пама пĕлмелле.

Кил-йышра ачасене тĕрĕс пăхса ӳстерни обществăшăн кăна мар, кашни çыншăн питĕ кирлĕ. Аван çемьере анчах ăслă та кăмăллă ачасене ӳстерме пултараççĕ. Çапла вара, шкулпа, учительсемпе çирĕп çыхăну тытса ĕçлесен, паллах ĕнтĕ, çитĕнӳ ăнăçлăрах, витĕмлĕрех пулать.

Список литературы

1. Пинт, А. О. Ача шăпи – пирĕн алăра / А. О. Пинт. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1977. – 176 с.

2. Васильев, Г. В. Ачасем – пирĕн савăнăç / Г. В. Васильев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1975. – 134 с.

3. Филипчук, Г. Пĕлетĕн-и, эсĕ ачуна? / Г. Филипчук. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1980. – 160 с.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)